27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
АВГУСТ
19
ШӐМАТКУН
163(6658) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Совет Союзӗн Маршалне КОНЕВА

УКРАЙНӐРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, САНДОМИР районӗнче ВИСЛА шывӗ урлӑ каҫса, вӑйлӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн, 50 километра ҫити малалла кайнӑ, ВИСЛА шывӗн хӗвеланӑҫ енче тытса илнӗ плацдарма фронт тӑршшӗпе 120 километр тарӑн сарнӑ та паян, августӑн 18-мӗшӗнче, САНДОМИР хулине — нимӗҫсен ВИСЛА шывӗн сулахай ҫыранӗнчи оборонин питӗ паха пунктне — штурмласа туртса илнӗ.

ВИСЛА шывӗ урлӑ каҫнӑ чухнехи тата Сандомир плацдармне туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче ПУХОВ генерал-лейтенантӑн, ЖАДОВ генерал-лейтенантӑн, ГОРДОВ генерал-полковникӑн, ЧЕРОКМАНОВ генерал-майорӑн, ОНУПРИЕНКО генерал-майорӑн, РОДИМЦЕВ генерал-майорӑн, МАКОВЧУК генерал-майорӑн, ЛЕБЕДЕНКО генерал-лейтенантӑн, ПУЗИКОВ генерал-майорӑн, ЗАХАРОВ генерал-майорӑн, ВЕХИН генерал-майорӑн, БЕЛЯЕВ полковникӑн, ПАНКРАТОВ генерал-майорӑн, КРАСНОВ генерал-майорӑн, МУРАТОВ полковникӑн, ГЛАДКОВ генерал-майорӑн, МАДЕТЯН подполковникӑн, САМСОНОВ полковникӑн, КОЛОБОВ полковникӑн, ТРОФИМОВ генерал-майорӑн, БАКЛАНОВ генерал-майорӑн, ОЛЕЙНИКОВ генерал-майорӑн, МОТОВ генерал-майорӑн, СКРЫГАНОВ полковникӑн, ПИЧУГИН генерал-майорӑн, СУХАНОВ генерал-майорӑн, РУСАКОВ полковникӑн, АНЦИФЕРОВ генерал-майорӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-полковникӗн ВАРЕНЦОВӐН, артиллери генерал-майорӗн ЯРОВОЙӐН, артиллери генерал-майорӗн ПОЛОСУХИНӐН, артиллери генерал-майорӗн КУБЕЕВӐН, артиллери генерал-майорӗн ДЗЕВУЛЬСКИН, артиллери генерал-майорӗн ПОЛУЭКТОВӐН, ХУСИД полковникӑн, ЦЕСАРЬ подполковникӑн, ПЕТРУНЯ подполковникӑн, БАСОВ полковникӑн, ДОБРЯНСКИЙ полковникӑн, ЧЕВОЛ полковникӑн, КОРОЗИН подполковникӑн, РУКОСУЕВ полковникӑн, СУССКИЙ полковникӑн, ФРАНЧЕНКО полковникӑн артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-полковникӗн НОВИКОВӐН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн ГЕТМАНӐН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн СУХОВӐН, ДРЕМОВ генерал-майорӑн, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн НОВИКОВӐН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн МИТРОФАНОВӐН танкисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн КРАСОВСКИН, авиаци генерал-лейтенанчӗн РЯЗАНОВӐН, авиаци генерал-майорӗн АГАЛЬЦОВӐН, авиаци генерал-майорӗн БАРАНЧУКӐН, ФЕТИСОВ подполковникӑн, авиаци генерал-лейтенанчӗн ЗЛАТОЦВЕТОВӐН, ОСАДЧИЙ полковникӑн, КУРОЧКИН полковникӑн, авиаци генерал-майорӗн УТИНӐН, ПОКРЫШКИН полковникӑн, МАЧИН полковникӑн, ГЕЙБО полковникӑн, ЮЗЕЕВ полковникӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн ГАЛИЦКИЙӖН, ВОЛОДИН полковникӑн, СОКОЛОВ полковникӑн, ГОРДЮКОВ полковникӑн, САЛАХОВ полковникӑн, БОДОЛЫННЫЙ полковникӑн саперӗсем; ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн БУЛЫЧЕВӐН, ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-майорӗн АХРЕМЕНКӐН, БОГОМОЛОВ полковникӑн, КОСТИН подполковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, ВИСЛА шывӗ урлӑ каҫнӑ чухнехи тата САНДОМИР плацдармне туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чӑссене «САНДОМИРСКИ» тата «ВИСЛЕНСКИ» тесе ят памалла тата орденсемпе наградӑлама тӑратӑп.

Паян, августӑн 18-мӗшӗнче, 23 сехетре хамӑр Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ инҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, ВИСЛА шывӗ урлӑ каҫса САНДОМИР плацдармне туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, ВИСЛА шывӗ урлӑ каҫса САНДОМИР хулине ирӗке кӑларнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи августӑн 18-мӗшӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

АВГУСТӐН 17-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Августӑн 17-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ПЕТСЕРИ (ПЕЧОРЫ) хулинчен ҫурҫӗртерехре тата хӗвеланӑҫнерехре, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан 150 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра — ВЫКСУ, РАПИН, КАУКСИ, ХИММАСТЕ, КАНЕПИ, КАЙКА, КРЮЧЬИ ятлӑ пысӑк ялсем тата РУЗА, ПЫЛА, КИДЬЯРВЕ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

ШАУЛЯЙ (ШАВЛИ) хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре, хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем тӑшман пехотипе танкӗсен наступлени пуҫласа янӑ пысӑк вӑйӗсемпе вӑйлӑн ҫапӑҫнӑ. Ку ҫапӑҫусенче пирӗн ҫарсем тӑшмана ҫынсемпе техника тӗлӗшӗнчен пысӑк ҫухату кӳнӗ.

МАРИАМПОЛЬ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, ШЕШУПА шывӗ ҫинче Хӗвелтухӑҫ Прусси чиккине тухнӑ, халӑх пурӑнакан 30 пункта туртса илнӗ.

ПРАГАРАН хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн ҫарсем тӑшман пехотипе танкӗсен атакисене ӑнӑҫлӑн сире-сире янӑ.

САНДОМИР хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ВИСЛА шывӗн сулахай хӗрринчи плацдарма аслӑлатасшӑн ӑнӑҫлӑ ҫапӑҫнӑ, халӑх пурӑнакан 20 пункта ытла туртса илнӗ. САНДОМИР хулинче пирӗн ҫарсем тӑшманпа ҫаплах хула урамӗсенче ҫапӑҫнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

Августӑн 16-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 200 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 63 самолетне персе ӳкернӗ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗнче

Чӑваш АССР Совнаркомӗ ҫак кунсенче рабочисемпе служащисене пахча-ҫимӗҫ тӑварлас тата йӳҫӗтес ӗҫре кирлӗ пулакан пичкесемпе каткасене юсас ӗҫе организацилесси ҫинчен сӳтсе-явнӑ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗ Наркомместпрома, РСФСР Совнаркомӗ ҫумӗнчи пром. кооераци Управленин Чӑваш республикинчи уполномоченнӑйне, Чӑвашкоопинсоюза, Чӑвашсоюза тата Чӑвашторга хӑйсен предприятийӗсемпе артелӗсенче кивӗ пичкесемпе каткасене юсассине тата ҫӗнӗрен тӑвассине организацилеме хушнӑ. Ҫӗнӗрен тунӑ каткасемпе пичкесене, профсоюз организацийӗсен заявкисем тӑрӑх, уйрӑм пахча тытакан рабочисемпе служащисене сутас ӗҫе организацилемелле.

Промышленность предприятийӗ директорӗсен, хӑйсен тӗп производствине сиен кӳмесӗр, ширпотреб цехӗсемпе ОРС-сен подсобнӑй предприятийӗсенче кивӗ пичкесемпе каткасене юсассине тата хӑйсен рабочийӗсемпе служащийӗсем валли ҫӗнӗрен тӑвассине организацилемелле, ҫавӑн пекех рабочисемпе служащисене пахча-ҫимӗҫсене усрамалли вырӑнсем — нӳхрепсем, подвалсем тума пулӑшмалла. Районсемпе хула совечӗсен исполком председателӗсем кивӗ пичкесемпе каткасене юсас тата пысӑках мар овощехранилищӗсем тӑвас ӗҫ мӗнле пынине яланах контроллесе тӑмалла тата ҫак ӗҫе организацилеме пулӑшмалла. Хуласемпе район совечӗсен исполком председателӗсен тата предприятисемпе учрежденисен руководителӗсен рабочисемпе служащисене ҫакӑн ҫинчен пӗлтермелле:

СССР Совнаркомӗ 1944 ҫулхи июлӗн 18-мӗшӗнче панӑ распоряжени тӑрӑх, рабочисемпе служащисем хӑйсен пахчисенчи ҫимӗҫсене сентябрӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа ноябрӗн 15-мӗшне ҫити вӑхӑтра вырӑнта та, хула ҫывӑхӗнче ҫӳрекен поездсем ҫинче те тата шывсем тӑрӑх та, халиччен тарифпа тӳлесе, 50 килограмм таран турттарма пултараҫҫӗ.

ВЛКСМ Обкомӗпе промысла коопераци управленийӗн уполномоченнӑйӗ патӗнче

ВЛКСМ Чӑваш Обкомӗпе промысла кооераци управленийӗн Чӑваш республикинчи уполномоченнӑйӗ промысла кооераци артелӗсенчи ҫамрӑксен бригадисен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1944 ҫулхи июль уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухса, ҫак бригадӑсем мала тухнине палӑртнӑ:

Вӑрмарти Чӑвашшвейпромсоюз системине кӗрекен Осипенко ячӗпе тӑракан артельти комсомолецсемпе ҫамрӑксен бригади (бригадирӗ Тюкова). Ҫак бригада июль уйӑхӗнчи производство планне 162 процент тултарнӑ. Ӑна ВЛКСМ Обкомӗпе промысла кооераци управленийӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне памалла тунӑ. Бригадирне 300 тенкӗ, бригада членӗсене 150-шар тенкӗ укҫа парса премилеме йышӑннӑ.

Ҫавӑн пекех Шупашкарти «Кожупряжь» (бригадирӗ М. Жезлова), Сӗнтӗрвӑрринчи «Портной» (бригадирӗ А. Степанова) артельсенчи комсомолецсемпе ҫамрӑксен бригадисем июль уйӑхӗнче лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

Колхозри мӗнпур ӗҫе вӑхӑтра та лайӑх туса пыма хурҫӑ пек ҫирӗп дисциплина кирлӗ

Виҫшер норма тултараҫҫӗ

ЧУРАЧАК. («Чӑваш Коммуни» корр.). Еншикри «Новая сила» колхоз (председателӗ Ф. Семенов юлташ) кӑҫалхи ҫул уйхир ӗҫӗсене ӑнӑҫлӑн туса пырать. Кашни колхозника участоксем уйӑрса панӑ. Ҫакӑн пек тунипе колхозниксем хапӑлласах йышӑннӑ.

Чылай колхозниксем каҫхине уйӑх ҫутипе тырӑ выраҫҫӗ. М. Семенова, А. Захарова, Ф. Афанасьева колхозницӑсем ирхине ӗҫе тухаҫҫӗ те хӗвел аничченех ӗҫлеҫҫӗ; унтан каҫхи апат ҫинӗ хыҫҫӑн кӑштах канаҫҫӗ, уйӑх хӑпарсан каллех хӑйсен участокӗсем ҫине вырма тухаҫҫӗ. Ҫапла вара вӗсем 3,5 норма тултараҫҫӗ, ӗҫшӗн хушса тӳленине шутласан, пӗтӗмпе талӑк хушшинче 9—10-шар ӗҫкунӗ илеҫҫӗ. Колхозра вӗсен ӗҫ опытне ытти колхозницӑсем те илнӗ. Асӑннӑ стахановкӑсем хӑйсемех кӗлте йӑтса суратсем тӑваҫҫӗ. Вӗсен ӗҫ пахалӑхӗ лайӑх.

«Новая сила» колхоз, иртнӗ ялхуҫалӑх ҫулӗнче каярах юлса пынӑскер, кӑҫал Л. Захаров, М. Димитриев, Ф. Семенов коммунистсем ҫине тӑрса ӗҫленипе ӗҫе тӗрӗс организацилесе районра малти рете тухрӗ. Колхозӑн пӗтӗмпе 242 гектар тӗштырӑсемпе пӑрҫа йышши культурӑсем пуҫтарса кӗртмелле, паянхи кун тӗлне 200 гектар ытла вырса, 20 гектар ҫинчи ыраш кӗлтине кӳрсе ҫапнӑ. Колхоз государствӑна тырӑ леҫмелли графика пурнӑҫласах пырать.

Тырӑ вырнӑ, авӑн ҫапнӑ ҫӗрте ӗҫе тӗрӗс организациленни кӗрхи тырӑсене акассине те ҫӑмӑллатать. Колхоз ыраш ҫурри ытла акнӑ. Акакан М. Зиновьев юлташ машинӑпа кулленех нормӑна ирттерсе пурнӑҫлать. Сухаҫӑсем Тимофеева, М. Иевина тата Е. Иванова юлташсем, кашни кунах 1,20—1,40 гектар сухаласа, нормӑна ытлашшипех тултараҫҫӗ.

С. ШАДИН.

Ыраш акса пӗтерне

ЧКАЛОВСКОЕ, августӑн 18-мӗшӗ. (Телефонпа). «Красный Октябрь» колхоз (председателӗ Булатов юлташ) ӗнерхи кун тӗлне ыраш акса пӗтернӗ. Ыраша пӗтӗмпех лайӑх пахалӑхпа тата сеялкӑсемпе акнӑ. Паян «Кзыл-тан» колхоз та (председателӗ Фейзуллин юлташ) ыраш акса пӗтерчӗ. Ӗҫӗн пахалӑхӗ кунта та лайӑх.

Ҫак колхозсем тӗштырӑсене вырса пӗтернӗ. Халӗ кӗлте турттарса капана хываҫҫӗ тата авӑн ҫапма тытӑнчӗҫ, государствӑна обязательствӑсем тӑрӑх тырӑ параҫҫӗ.

Пуса татса пӗтерне

ЕЛЧӖК, августӑн 18-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри колхозсем паянхи кун тӗлне 564 гектар кантӑр ҫинчен пуса татса пӗтернӗ, ҫапла вара пуса татмалли плана район пӗтӗмпех тултарнӑ. Халӗ татнӑ пусана шыва хутаҫҫӗ, курӑк ҫине сараҫҫӗ.

Малта пыракансен ретне тӑтӑмӑр

Пирӗн колхоз иртнӗ ҫулсенче районра кая юлакан колхозсенчен пӗри пулнӑ. Ӗҫ вӑйне организацилеме пӗлмен пирки, колхозри мӗнпур ӗҫсем юлса пыратчӗҫ.

Хамӑрӑн ӗҫе юсас, колхоза малти рете кӑларас, колхозниксен пурнӑҫ условийӗсене лайӑхлатас тесен, чылай вӑй хурса ӗҫлени тата организованность пулни кирлӗ. Эпир кӑҫалхи ялхуҫалӑх ҫулӗнче хамӑрӑн ӗҫри ҫитменлӗхсене пӗтерсе малти вырӑна тухма задача лартрӑмӑр. Хамӑрпа юнашарти Молотов ячӗпе тӑракан колхозпа ӑмӑртӑва тухрӑмӑр.

Чи малтанах эпир ӗҫ планӗсене тунӑ, кашни ҫынна уйрӑм участоксем уйӑрса панӑ.

Тырра пиҫсе ҫитнӗҫемӗн вырма тытӑнтӑмӑр. Талккишӗпех пиҫсе ҫитсен массӑллӑн вырма пуҫланӑ. Кашни колхозника ыраш тата ҫуртыррисем вырса пуҫтарма 1,59 гектар участок уйӑрса панӑ. Вӗсем ҫав участока вырса пуҫтарассишӗн ответлӑ пулнӑ. Кашни кунхи норма тӑрӑх пӗр колхозникӗн 0,10 гектар вырмаллаччӗ. Пирӗн колхозниксем хӑйсен нормине тултарса пырас тата тырра хуҫалма пуҫличчен вырса пӗтерес тесе, ӗҫе ирхине 4 сехетре тухнӑ, каҫхине 10 сехетре ӗҫрен кӗнӗ.

Кӗтӳсене ирхине ирех хӑвалана. Чылай ялсенче кӗтӳ пӑхакансене выльӑх-чӗрлӗх усракан колхозниксем черечӗпе апат пӗҫерсе параҫҫӗ. Эпир, колхозниксене тухӑҫлӑрах ӗҫлеттерес тата кантарас тесе, кӗтӳ пӑхакансене колхозрах апатлантартӑмӑр. Ҫапла вара ку тӗлӗшпе колхозри ӗҫ вӑйне пӗр минута та расходламан. Кашни колхозник хӑйӗн участокӗнче иртен пуҫласа каҫчен ӗҫленӗ.

Нумай колхозниксем харпӑрхӑйӗн нормисене икшер хут ытла ирттерсе тултарчӗҫ. Пӗррӗмӗш бригадӑри Марфа Семенова, Елизавета Андреева, Анна Осипова, Клавдия Иванова 0,10 гектар вырӑнне 0,20—0,21-шар гектар вырса пычӗҫ. Колхозри ӗҫлеме пултаракан вӑйпитти 36 ҫынран 25 ҫынӗ стахановецсем.

Ҫапла эпир кӗрхи тырӑсене 7 кун хушшинче, ҫуртыррисене (пӑрҫа йышши тырӑсене кӗртмесӗр) 8 кунта вырса пӗтернӗ. Тырра алӑпа вырнӑ тата ҫавапа ҫулнӑ. Ыраш вырма тухсан 4-мӗш кунӗнчех авӑн ҫапма тытӑннӑ. Ҫав вӑхӑтрах транспорт бригадинчи 6 ҫын государствӑна тырӑ леҫсе тӑнӑ, авӑн ҫапнӑ ҫӗрте чи малтанхи кунсенче 8 ҫын, кӗлте кӳнӗ ҫӗрте 4 ҫын ӗҫленӗ. Ҫав вӑхӑтрах тырӑ вырнӑ ҫӗрте 18 ҫын ӗҫленӗ (ку шута подростоксем кӗмеҫҫӗ). Ыраш вырса пӗтернӗ хыҫҫӑн авӑн ҫапакансен йышне ӳстерсе пытӑмӑр, авӑн ҫапма 16 ҫын уйӑртӑмӑр. Ыраш акма 4 ҫын, сухалама 4 ҫын янӑ. Вӗсене те уйрӑм участоксем ҫирӗплетсе панӑ. Николай Архиповпа Елена Григорьева кулленех 1,30 гектар сухалаҫҫӗ.

Кӑҫалхи ҫул пӗтӗм ялхуҫалӑх ӗҫӗсене октябрь уйӑхӗ пуҫланнӑ тӗле вӗҫлеме шанӑҫ пур.

Колхозри пӗрлешӳллӗ столовӑй пысӑк вырӑн йышӑнать. Ҫавӑнпа та колхозри столовӑя эпир пӗрмаях ӗҫлеттеретпӗр. Авӑн ҫапса пӗтермесӗр пӗрлешӳллӗ апатланассине пӑсма шутламастпӑр. Халӗ кашни кун икӗ хут апат пӗҫеретпӗр.

Колхозра ӗҫ нормисене тултарайман колхозниксем ҫук. Колхозниксен ӗҫкунӗсене кашни кунах ҫырса пырассине йӗркеленӗ. Колхоз счетоводӗ А. Гаврилова юлташ учета йӗркеллӗ туса пырать. Пӗр ӗҫкунӗ те ҫухалмасть. Тырӑ вырнӑ чухне ӗҫшӗн хушса тӳлес йӗркене пурнӑҫласа пынӑ. Пӗтӗмпе тырӑ вырнӑ чухне 20 колхозницӑна ӗҫшӗн хушса тӳленӗ. Ку ӗҫе кашни кунах бригадирсем туса пыраҫҫӗ.

Колхозра пур ӗҫе те пӗр вӑхӑтра туса пырасси ӗҫе тӗрӗс организациленинчен килет. Хӗрсе тырӑ вырнӑ вӑхӑтрах эпир чӑх-чӗпсем валли ҫӗнӗ вите тата фермӑра ӗҫлекенсене пурӑнма ҫӗнӗ пӳрт туса лартрӑмӑр.

Кӑҫал кашни тырпула тата вӑрлӑха уйрӑмӑн хума амбарсем хатӗрленӗ.

Иван ПЕТРОВ,
Красноармейски районри «Жнейка» колхоз председателӗ.

Ӗҫе тӗрӗс йӗркеленӗ ҫӗрте

ШАХАСАН, августӑн 16-мӗшӗ. (Телефонпа). Вӑрман Енӗшри «Свобода» колхозра тырӑ вырнӑ ҫӗрте уйрӑм сдельщинӑпа анлӑн усӑ кураҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерме пулӑшать. Ҫапла, А. Алексеев колхозник, хӑй 76 ҫулта пулин те, ҫамрӑксенчен юлмасть. Унӑн икӗ ывӑлӗ фронтра.

— Ывӑлӑмшӑн та, хамшӑн та ӗҫлетӗп, — тет вӑл ҫамрӑксемпе ӑмӑртса. 8 кун хушши ыраш вырса вӑл 33 ӗҫкунӗ тунӑ. К. Лаврентьева колхозница та хиртре ӗҫлекенсенчен чи ватти шутланать, анчах ӗҫре вӑл — чи хастартараххи. Ыраш вырнӑ ҫӗрте кӑна вӑл 34 ӗҫкунӗ ӗҫлесе илнӗ. Ҫавӑн пекех А. Ефимова, В. Алексеева, О. Григорьева, Е. Титова, З. Чернова колхозница-ударницӑсем те кулленех 0,19—0,26-шар гектар сӗлӗ выраҫҫӗ. Ыраш вырнӑ ҫӗрте вӗсем 46—57-шер ӗҫкунӗнчен кая туман. 7-мӗш класра вӗренекен Иван Мальцев нормӑна 115—120 процент тултарса ӗҫлет. Кун пек тӑрӑшса ӗҫлекенсем татах та нумай.

Алӑпа вырнипе пӗрлех машинӑпа та туллин усӑ кураҫҫӗ. Машинист пулса Г. Захаров комсомолец ӗҫлет. Вӑл кунне 4 гектар вырас вырӑнне 6 гектартан кая вырмасть.

Колхоз августӑн 10-мӗшӗ тӗлне ыраш вырса пӗтерсе ҫурхи тырӑсене вырма тытӑнчӗ. Халӗ 29 гектар ытла сӗлӗ вырнӑ, урпа вырса пӗтернӗ, 59 гектар ҫинчи кӗлтесене турттарса капана хывнӑ. Кунта кӑнтӑрла та, ҫӗрле те авӑн ҫапаҫҫӗ. Халиччен 47 гектар ҫинчи тырра ҫапнӑ. Вӑл шутран 176 центнер государствӑна леҫсе панӑ.

Ҫак ӗҫсемпе пӗрлех кӗрхи тырӑсем акас ӗҫ те ӑнӑҫлӑн пулса пырать. Паянхи куна 76 гектар акнӑ, икӗ сеялка ӗҫлет. Вӗсемпе Ф. Трофимовпа П. Иванов юлташсем кунне 3-шер гектар акас вырӑнне 5—5,5 шар гектар акаҫҫӗ.

В. ВЕСЕЛОВ.

РЕСПУБЛИКӐРИ КОЛХОЗСЕМ СИЛОС ХЫВМАЛЛИ ПЛАНА 1944 ҪУЛХИ АВГУСТӐН 15-МӖШӖ ТӖЛНЕ МӖН ЧУХЛӖ ТУЛТАРНИНЕ КӐТАРТАКАН

СВОДКА

(Процентпа)

Районсем	Силос хывнӑ
Комсомольски	129,5
Чурачӑк	121,1
Кувакино	108,8
Сӗнтӗрвӑрри	105,0
Чкаловски	103,0
Ҫӗмӗрле	102,9
Ҫӗрпӳ	102,7
Шупашкар	101,7
Елчӗк	102,2
Вӑрмар	100,9
Первомайски	100,8
Элӗк	100,3
Красноармейски	100,3
Улатӑр	100,0
Муркаш	99,0
Калинино	98,9
Сӗнтӗр	95,1
Канаш	98,5
Шӑмӑршӑ	90,3
Вӑрнар	88,9
Тӑвай	87,2
Етӗрне	85,2
Йӗпреҫ	83,3
Ишлей	82,5
Куславкка	79,0
Советски	78,8
Хӗрлӗ Чутай	75,1
Шӑхасан	74,4
Октябрьски	73,4
Пӑрачкав	72,6
Шупашкар хули	25,0
Пӗтӗмпе	94,5

Каҫхине те тырӑ выраҫҫӗ

СӖНТӖР, августӑн 18-мӗшӗ. (Телефонпа). Молотов ячӗпе тӑракан колхоз иртнӗ ҫулта ялхуҫалӑх ӗҫӗнче кая юлса пынӑ. Кӑҫал кунта председатель пулса парти членӗн кандидачӗ Никифоров юлташ ӗҫлет. Вӑл лайӑх ертсе пынипе колхозра ӗҫсем йӗркеллӗ пулса пыраҫҫӗ. Колхоз государствӑна утӑ парса татнӑ, силос планне тултарнӑ. Тырпулсене пухса кӗме лайӑх хатӗрленсе тухнӑ. Уборкӑн малтанхи кунӗнчен пуҫласах столовӑйӗнче 3-шер хут апат ҫитереҫҫӗ. Колхозра нормӑна тултарман колхозник пӗрре те ҫук. А. Скворцова юлташ звенинче ӗҫлекен О. Павлова, Ф. Павлова, Д. Васильева, Е. Васильева, А. Скворцова, П. Ефимова юлташсем каҫхине те киле таврӑнмаҫҫӗ, уйрах выртаҫҫӗ. Ҫапла ӗҫлесе вӗсем кунне 0,25—0,26-шер гектар, вӑл шутран 0,07 гектар каҫхине выраҫҫӗ.

Уйхирте агитациллӗ-массӑллӑ ӗҫе тивӗҫлипе туса пыраҫҫӗ. Колхозниксем апатланмалли вырӑнта стена хаҫачӗ, Хисеп хӑми, ҫӗнӗ хаҫатсем ҫакӑнса тӑраҫҫӗ. Колхоз председателӗ Никифоров тата Петровӑпа Николаева агитаторсем колхозниксене тӑтӑшах вӑрҫӑ фронтӗнчи ҫӗнӗ хыпарсене пӗлтерсе тӑраҫҫӗ.

Колхозниксем ыраша 8 ӗҫкунӗнче вырса пӗтерчӗҫ. Ҫав хушӑрах государствӑна 50 центнер тырӑ тата пахча-ҫимӗҫ леҫсе панӑ, халӗ колхозра сӗлӗ вырас ӗҫ хӗрӳллӗ пырать.

П. ИСАЕВ.

ВКП(б) Чӑваш Обкомӗнче

Шупашкар районӗнче тырпул пухса кӗртнӗ тата ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрленӗ вӑхӑтра массӑллӑ-политикӑллӑ ӗҫе мӗнле йӗркелени ҫинчен

ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ Шупашкар районӗнче тырпул пухса кӗртнӗ тата ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрленӗ вӑхӑтра массӑллӑ-политикӑллӑ ӗҫе йӗркелес тӗлӗшпе чылай пысӑк ҫитменлӗхсем пуррине палӑртнӑ. СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗн «1944 ҫулта тырпул пухса кӗртесси тата ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрлесси ҫинчен» йышӑннӑ постановленине кашни колхозникпе МТС работникӗ патне ҫитермен. Ҫапла, сӑмахран, «Крахмал» колхозра ҫав постановление сӳтсе-явнӑ чухне пухура 150 ҫынран пурӗ те 54 ҫын кӑна пулнӑ. Колхозра уйрӑм сдельщинӑпа тата пысӑк мар ушкӑнсемпе ӗҫлессине йӗркелемен, уйхир ӗҫӗнче социализмлӑ ӑмӑрту организацилемен. Колхозниксене ӗҫкунӗсем миҫе кӗлте вырнӑ тӑрӑх шутласа параҫҫӗ, ӑмӑрту мӗнле пынине кӑтартакан хӑмапа Хисеп хӑми туман, уйхир бригадисемпе транспорт бригадисенче агитаторсем колхозниксем хушшинчи ӑнлантарулла ӗҫе куллен туса пымаҫҫӗ, курса вӗренмелли агитацие организацилемен, стена хаҫачӗсемпе боевой листоксем сайра-хутра ҫеҫ тухса тӑраҫҫӗ. 1944 ҫулта районри ертсе пыракан работниксенчен ӗҫсыннисем хушшинче никам та политикӑллӑ докладсем туса паман.

Районри уйрӑм колхозсенче ирттерекен политикӑллӑ докладсемпе калаҫусем идейӑпа политика тӗлӗшӗнчен аялти пусӑмра тӑраҫҫӗ. Ҫапла, сӑмахран, «Броневик» колхозра СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗн «1944 ҫулта тырпул пухса кӗртесси тата ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрлесси ҫинчен» йышӑннӑ постановленине ӑнлантарса парас ӗҫе ячӗшӗн кӑна туса ирттернӗ. Ӑна колхозниксен пухӑвӗнче вуласа тухнӑ та, унӑн политикӑллӑ пӗлтерӗшне тата ҫав постановленирен колхозпа колхозниксем умне тухса тӑракан практикӑллӑ задачӑсене ӑнлантарса паман.

Ҫапла вара Шупашкар районӗнчи чылай колхозсенче агитациллӗ-массӑллӑ ӗҫе партипе правительство «1944 ҫулта тырпул пухса кӗртесси тата ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрлесси ҫинчен» йышӑннӑ постановленире лартнӑ задачӑсене пурнӑҫа кӗртессипе ҫыхӑнтарса пыраҫҫӗ.

Районри хӑшпӗр вулав ҫурчӗсем хут ҫинче кӑна шутланса тӑраҫҫӗ, вӗсен хӑйсен ҫурчӗсем ҫук, ӗҫлекен вулав ҫурчӗсене те кирлӗ пек йӗркелемен (Шӑнкасри, Кочакри, Апашри вулав ҫурчӗсем). Районри социализмлӑ культура ҫуртне те япӑхтарса янӑ: ӑна ӗнтӗ нумайранпа юсаман, кантӑкӗсене лартман, шалта та нимӗн йӗрки те ҫук.

Районри «Ленин ҫулӗпе» хаҫат тырпул пухса кӗртес тата ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрлес ӗҫ районра мӗнле пынине ҫителӗксӗр ҫутатса тӑрать. Партипе комсомол пурнӑҫӗн ыйтӑвӗсене, социализмлӑ ӑмӑртӑва вӑйлатас, колхозниксемпе МТС работникӗсем хушшинчи массӑллӑ-политикӑллӑ ӗҫе сарас, ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен опычӗпе мӗнпур колхозниксене паллаштарас ыйтусене хаҫатра тивӗҫлӗ вырӑн паман.

ВКП(б) Обком бюровӗ ҫапла йышӑннӑ:

1. ВКП(б) Шупашкар райкомӗн секретарьне Караушев юлташа тата парти райкомӗн пропагандӑпа агитаци отделӗн заведующине Деева юлташа районри чылай колхозсенче массӑллӑ-политикӑллӑ ӗҫе ҫителӗксӗр йӗркеленине кӑтартса парас.

2. ВКП(б) Шупашкар райкомне СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗн «1944 ҫулта тырпул пухса кӗртесси тата ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрлесси ҫинчен» йышӑннӑ постановленине колхозниксемпе МТС работникӗсене тӗплӗн ӑнлантарса парассине организацилеме, ҫав постановление кашни колхозникпе колхозница тата МТС работникӗ патне ҫитерме хушас. Районри мӗнпур массӑллӑ-политикӑллӑ ӗҫе ҫав постановление пӗр пӑркаланмасӑр пурнӑҫа кӗртес задачӑсене пӑхӑнтармалла. Кунта уйрӑмах колхозсемпе МТС-ра ӗҫе организацилесси ҫине, колхозсем, колхозниксем тата МТС работникӗсем хушшинчи социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарас, тырпул пухса кӗртес ӗҫе хӑвӑртрах вӗҫлес, тырпула тӑккаланине хирӗҫ кӗрешес, авӑн ҫапас тата тырпула лайӑх сыхласа усрас, колхозсемпе колхозниксем государство умӗнчи хӑйсен мӗнпур обязательствисене вӑхӑтра парса татас ӗҫсем ҫине тимлӗн ҫаврӑнса пӑхмалла.

3. ВКП(б) Шупашкар райкомне тӑтӑшах, уйӑхра пӗр хутран кая мар, агитколлектив руководителӗсен, агитаторсемпе докладчиксен тата политпросвет работникӗсен семинарӗсене, инструкцисем памалли канашлӑвӗсене туса ирттерме, вӗсен ӗҫне куллен тӗрӗслесе тӑма, вӗсене ӗҫлӗ пулӑшу парса пыма тата ВКП(б) райкомӗн бюровӗнче агитколлективсемпе политпросвет учрежденисен ӗҫӗ ҫинчен кашни уйӑхрах отчетсем итлеме хушас. Кашни уйхир бригади, транспорт бригади тата трактор бригади валли халех тивӗҫлӗ агитаторсем тупса ҫирӗплетмелле. Районри кашни колхозрах ӑмӑрту мӗнле пынине кӑтартакан хӑмасем организацилемелле, ӑмӑрту итогӗсене кунсеренех пӗтӗҫтерсе пымалла, хаҫат витринисем тумалла, стена хаҫачӗсемпе боевой листоксем тӑтӑшах кӑларса тӑмалла. Агитациллӗ-массӑллӑ ӗҫе комсомолецсене, интеллигенцие тата ялхуҫалӑхӗнче малта пыракан ҫынсене анлӑн явӑҫтармалла.

4. ВКП(б) Обкомӗ ҫакна палӑртать: партин Шупашкар райкомӗ ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗн «Ялти халӑх валли политикӑллӑ докладсем организацилесси ҫинчен» тата «Чӑваш республикинчи культурӑллӑ-ҫутӗҫ учрежденийӗсен ӗҫӗ ҫинчен» йышӑннӑ постановленийӗсене ҫителӗксӗр пурнӑҫа кӗртсе пырать. Парти Обкомӗ ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗн ҫав постановленийӗсене пӗр пӑркаланмасӑр пурнӑҫа кӗртме кирлӗ пур мерӑсене те йышӑнма хушать. Кашни уйӑхра — уйӑх ҫурӑра районра ертсе пыракан работниксен тата райком докладчикӗсен кашни колхозрах политикӑллӑ докладсем туса ирттермелле, кӑҫалхи сентябрӗн 1-мӗшӗнчен кая юлмасӑр мӗнпур вулав ҫурчӗсене тата колхоз клубӗсене хӗллехи условисенче ӗҫлеме хатӗрлесе ҫитермелле (юсаса ӑшӑ тытакан тумалла, ҫутмалли хатӗрсем тупса памалла, вутӑ хатӗрлесе памалла). 1944 ҫулхи октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне вара районри соцкультура ҫуртне юсаса йӗркене кӗртмелле. Уйӑхра икӗ хутран кая мар колхозниксене кино кӑтартас ӗҫе организацилемелле.

5. Парткабинетӑн ӗҫӗнче, пуринчен малтан, докладчиксене, пропагандистсене, агитколлективсен руководителӗсене, агитаторсене, политпросвет работникӗсене тата большевикла партин историйӗпе теорине, хальхи вӑхӑтри вӑрҫӑпа политика тӗлӗшӗнчи тата тӗнчери лару-тӑрӑва хӑйсем тӗллӗн вӗренекенсене куллен пулӑшса тӑрасси ҫине уйрӑмах тимлӗн ҫаврӑнса пӑхмалла.

6. ВКП(б) райкомӗн секретарьне Караушев юлташа тата пропагандӑпа агитаци отделӗн заведующине Деева юлташа вӗсем районри хаҫат ӗҫне тата колхозсенчи стена хаҫачӗсемпе радиовещани ӗҫне кирлӗ пек ертсе пыманни ҫинчен асӑрхаттарас.

Караушевпа Деева юлташсене вырӑнти пичетпе радиовещани тата кино ӗҫӗсене куллен ертсе пыма хушас. Районри хаҫатра чи лайӑх колхозсемпе колхозниксен, бригадирсен, трактористсемпе комбайнерсен, агитколлективсен, агитаторсен, партипе комсомол организацийӗсен паха опытне кӑтартассине организацилемелле. Кашни уйӑхрах колхозсемпе стена хаҫачӗсен редакторӗсене пухса, семинарсем туса ирттермелле, районри хаҫат корреспондентсемпе тӑтӑшах ӗҫлессине йӗркелемелле. Районри, МТС-па колхозсенчи ертсе пыракан работниксем, ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансем радио тӑрӑх тӑтӑшах тухса калассине организацилемелле.

7. Партин мӗнпур райкомӗсене ҫак постановление сӳтсе-явма тата хӑйсен районӗсенчи колхозсенче массӑллӑ-политикӑллӑ ӗҫе йӗркелес тӗлӗшпе палӑрнӑ ҫитменлӗхсене пӗтермешкӗн ӗҫлӗ мерӑсем йышӑнма хушас.

Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсем—Совет стройĕн çĕнтерĕвĕсем

Совет халăхĕ тăваттăмĕш çул ĕнтĕ фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç Отечественнăй аслă вăрçă туса пырать. Çак вăхăтра пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар нимĕç çарĕсене калама çук пысăк çухатусем тÿстерчĕ. Фашистла нимĕç захватчикĕсем юлашки çулталăк çурă хушшинче, Сталинград патĕнче аркатса тăкнăранпа, вăй илме пултараймарĕç. Совет çарĕсем, мĕнпур фронтсенче наступлени пуçарса ярса, нимĕçсен Сталинград, Ленинград патĕнчи, Днепр шывĕ çинчи, Перекоп, Севастополь патĕнчи, Карели перешеекĕнчи, Свирь шывĕ çинчи, Витебск, Орша, Могилев, Минск, Вильно патĕнчи вăйлăн çирĕплетнĕ оборона системине çĕмĕрсе тăкрĕç, пысăк шывсем — Дон, Çурçĕр Донец, Десна, Волхов, Днепр, Кăнтăр Буг, Днестр, Прут, Серет, Нарва, Свирь, Хĕвеланăç Буг, Неман, Висла урлă каçрĕç. Çапла вара, Хĕрлĕ Çарăн çапăçусенче тĕрĕсленнĕ тата пиçĕхнĕ воинĕсем вĕсене нимĕнле валсемпе крепоçсем те тытса чарма пултарайманнине кăтартса пачĕç.

Хĕрлĕ Çарăн наступлени туса пырас хăвачĕ кунран кун ÿссе пырать. Ăна Белоруссипе Прибалтикăри тата Украинăри çапăçусем уçăмлăн çирĕплетсе параççĕ. Хĕрлĕ Çар чи вăйлă çар, çапăçусенче пиçĕхнĕ çар пулса тăчĕ. Çакă вăл, чи малтан, Совет стройĕ тĕреклĕ пулнинчен килет.

Сталин юлташ хăйĕн 1944 çулхи февралĕн 23-мĕшĕнчи приказĕнче çапла каларĕ: «Германишĕн çак факт чылай пысăк минус пулса тăрать: Совет Союзĕ çак вăхăтра кивĕ патша Российи иртнĕ вăрçăра пулнинчен нумай вăйлăрах». Совет Союзĕн ĕлĕкхи вăрçăра, Германие хирĕç вăрçнă вăрçăра, патша Российи тĕл пулма лекнĕ вăйран ытларах вăйпа тĕл пулма килчĕ. Ун чухне нимĕçсем ресурссене хальхи пек пĕтĕм Европипе тенĕ пекех хăйсен аллинче тытайман. Ун чухне нимĕçсене хирĕç ултă аслă державăн хĕçпăшаллă вăйĕсем çапăçнă. Халĕ нимĕçсен тĕп вăйĕсем пĕр фронтра — Совет Союзне хирĕç кăна кĕрешеççĕ-ха. Ун чухне вырăс фронтĕнче нимĕçсен 85 дивизирен ытла пулман. Ку вăрçăра Германи Совет Союзне хирĕç çĕнĕ техникăпа хĕçпăшаллантарнă 207 дивизи тăратрĕ (ку шута унăн вассалĕсен дивизийĕсем кĕмеççĕ). Иртнĕ вăрçăн пуçламăшĕнче, 1914 çулта, нимĕçсем вырăс фронтĕнче çирĕм дивизи кăна тытса тăма пултарнă пулсан, 1941 çулта вĕсем, ăнсăртран тапăнма май пуррине усă курса, хăйсен пĕтĕм тĕп вăйĕсене Совет Союзне хирĕç пăрахма пултарчĕç.

Иртнĕ вăрçă вăхăтĕнче патша Российи техникăпа экономика тĕлĕшĕнчен калама çук кая юлнă çĕршыв пулнă. Çавăнпа та ун чухне, Европăра Германие хирĕç икĕ фронт пулнă пулин те, Россия çарĕ нимĕç çарне путарса лартма пултарайман. Хĕрлĕ Çар Гитлерăн калама çук пысăк вăйне тытса чарчĕ кăна мар, нимĕçсен фашистла çарне татăклăнах çапса аркатрĕ, çапла вара фашистла Германие пĕтсе ларасси умне пырса тăратрĕ. Хĕрлĕ Çарсăр пуçне урăх нимĕнле çар та, Совет Союзĕсĕр пуçне урăх нимĕнле государство та çакăн пек калама çук пысăк йывăрлăха тÿссе ирттерейми пулĕччĕ. Пирĕн çĕршыв çак вăрçăра тÿссе ирттернĕ йывăрлăхсем совет стройĕн калама çук пысăк вăйне кăтартса пачĕç. Пирĕн çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне совет стройĕ, Ленинпа Сталин партийĕн политики çăлса хăварчĕç.

Патша Российи техника тĕлĕшĕнчен кая юлнă çĕршыв пулнă. Машинăсем тĕлĕшĕнчен илсен, Германипе танлаштарсан Россия пилĕк хут каярах тăнă. Ун чухне машинăсене пĕтĕмпе тенĕ пекех ют çĕршывсенчен кÿрсе килсе тăнă. Патша Российин оборона промышленноçĕ тĕнчери оборона промышленноçĕнчен юлса пынă. Çавăнпа та иртнĕ вăхăтра нимĕçсен кашни салтакĕ пуçне çирĕм снаряд пулнă пулсан, патша çарĕнчи салтак пуçне пĕр снаряд кăна пулнă. Вăрçă тăватă уйăх çине кĕрсенех патша Российин çарĕ хĕçпăшал çитменнине туйма пуçланă. Çапла, 1916 çулта çуркунне патронсемпе снарядсем кирлĕ виçерен çуррине яхăн кăна пулнă. Ăна та пулин чылайĕшне ытти çĕршывсенчен илсе килсе тăнă.

Октябрьти социализмлă аслă революци хыççăн, влаçа рабочисемпе хресченсем хăйсен аллине илсенех, хамăр çĕршыва чура пусла тăрассинчен çăлса хăварас тесе, Ленинпа Сталин вăйлă индустриллĕ державăсене техника тĕлĕшĕнчен кĕске вăхăтрах хăваласа çитсе иртсе каяс задача лартрĕç. 1931 çулта Сталин юлташ çапла каларĕ: «Эпир малта пыракан çĕршывсенчен 50—100 çула кая тăрса юлтăмăр. Пирĕн çав çулйĕре вунă çул хушшинче чупса тухас пулать. Е эпир çавна тăватпăр, е пире таптаса тăкаççĕ». Большевиксен партийĕ ертсе пынипе пирĕн совет государстви çав задачăна калама çук кĕске срокра пурнăçламан пулсан, вăл хăйĕн умне килсе тухнă вăрçă йывăрлăхĕсене тÿссе ирттерме пултарайман пулĕччĕ.

Большевиксен партийĕн аслă политики Совет Союзне чура пуласран çăлса хăварчĕ. Совет Союзĕ 1941 çулта вăрçă пуçланнă вăхăтра, патша Российинче 1914 çулти вăрçă пуçланнă вăхăтра пулнипе танлаштарсан, 50 хут ытларах машина туса кăларнă. Çакăн пек калама çук пысăк результатсене совет стройĕ кăна тума пултарнă. Сталинла пилĕкçуллăхсен планĕсене пурнăçа кĕртнипе пирĕн çĕршыв индустриллĕ çĕршыв пулса тăчĕ. Пирĕн çĕршыв хулара та, ялта та чи малта тăракан техника базине туса хучĕ.

Çар техники ÿссе пырасси индустри ÿссе пынинчен килет. Çавăнпа та Хĕрлĕ Çар хăйĕн историллĕ çĕнтерĕвĕсенче хăйĕн техники малта тăнине кăтартса пама пултарчĕ. Виçĕ çул хушшинче тăшман 70 пин танк, 60 пин самолет, 90 пин ытла оруди çухатрĕ. Çав вăхăтра пирĕн 49 пин танк, 30.128 самолет тата 48 пин оруди пĕтнĕ. Халĕ ĕнтĕ нимĕçсен официальнăй обозревателĕсем те Хĕрлĕ Çар техника тĕлĕшĕнчен нимĕç çарĕнчен ытларах хĕçпăшалланнине йышăнаççĕ.

Вăрçă совет стройĕн экономики фашистла Германи экономикинчен малта тăнине кăтартса пачĕ. Совет стройĕ, хамăр çĕршывăн пуянлăхĕсене мобилизацилесе, вăрçă нуши валли парса тăрать.

Нимĕç ирсĕрĕсем совет промышленноçĕ кучухнехи вăрçă хатĕрĕсене массăллăн кăларас йывăр задачăсене пурнăçа кĕртме пултараймĕ тесе, пирĕн транспорт вăрçă хатĕрĕсене турттарас ĕçе пурнăçа кĕртме пултараймĕ тесе, ялхуçалăхĕ вара çарпа халăха апат-çимĕç, промышленноçа чĕртаварсем çителĕклĕ тăратма пултараймĕ тесе шутланă. Вăрçăн виçĕ çулталăкĕ хушшинче Совет Союзĕн экономики мар, гитлерла Германин экономики юхăнса кайрĕ. Нимĕçсем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра тÿснĕ çухатусем тата союзниксен авиацийĕ пыра-пыра çапни Германин экономикăпа вăрçă хăватне сисĕнмеллех хавшатрĕç. Çав вăхăтрах Совет çĕршывĕн промышленноçĕпе транспорчĕ тата ялхуçалăхĕ вăрçă вăхăтĕнчи тĕрĕслеве ăнăçлăн тÿссе ирттерчĕç. Совет халăхĕ хамăрăн тăван çĕршыва хÿтĕлессишĕн хăйĕн вăй-хăватне шеллемест, вăл хăй тунă совет государствине тăшманран хÿтĕлеме хатĕррине кăтартса парать. Отечественнăй вăрçă халăхсен патриотизмне нихăçанхинчен ытла ÿстерсе ячĕ, халăх массисен мĕнпур творчествăллă вăй-хăватне Хĕрлĕ Çара пулăшма мобилизацилерĕ. Халĕ, вăрçăн тăваттăмĕш çулталăкĕ пынă чухне, Совет Союзĕн хăватлă вăрçă хуçалăхĕ пур, вăл Хĕрлĕ Çара хĕçпăшалсем, боеприпассем, апат-çимĕç, снаряжени ытлăн-çитлĕн парса тăрать.

Хĕрлĕ Çарăн çирĕп те шанчăклă тыл пур. Совет рабочисем, колхозниксем, интеллигенци, Совет Союзĕн халăх хуçалăхне фронт ыйтăвĕсене тивĕçтерес майпа йĕркелесе, Хĕрлĕ Çара çĕнтерÿ тума мĕн кирлине пурне те парса тăраççĕ. Хамăрăн тăван çĕршывшăн питĕ хаклă районсене, промышленность, ялхуçалăх, чĕртавар районĕсене вăхăтлăха çухатнă пулин те, пирĕн пĕтĕм халăх хуçалăхĕ Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине пĕтĕмпех парса тăма пултарчĕ. Большевиксен партийĕ, пĕтĕм халăхăн вăйне пĕр çĕре пухса, ăна тăшмана çапса çĕмĕрме мобилизацилерĕ.

Совет Союзĕнче Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче пысăк строительство пулса пычĕ. Çĕнĕрен заводсем, шахтăсем, чугун çулсем туса ĕçе янă, çав шутра Магнитогорскри комбинатри 5-мĕш тата 6-мĕш номерлĕ калама çук пысăк домнăсене те ĕçе янă. Халĕ фашистла захватчиксенчен тасатнă районсенче завод хыççăн завод, шахта хыççăн шахта ĕçе кĕре пуçларĕ. Пирĕн ялхуçалăхĕ вăрçă вăхăтĕнче çĕршыва тата Хĕрлĕ Çара продовольстви парса тăрас задачăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырать. Вăтам шутпа илсен, кашни колхозник вăрçăчченхинчен чылай ытларах ĕçкунĕ туса илекен пулчĕ. Паллах, колхозлă строй пулман пулсан, ун вырăнне ĕлĕкхи вак-тĕвек хресчен хуçалăхĕсем пулнă пулсан, ялхуçалăхĕ хальхи вăрçă условисенче Хĕрлĕ Çара çителĕклĕ таран продовольстви парса тăма пултарайман пулĕччĕ.

Хĕрлĕ Çара çĕнтерÿ тума çакă та пулăшрĕ: вăрçăччен большевиксен партийĕ, социализмлă индустрие аталантарас тата ялхуçалăхне коллективизацилес политикăна пурнăçласа пынă вăхăтрах, пирĕн çĕршывра нумай миллионлă, кучухнехи техникăна вĕренсе алла илнĕ индустри кадрĕсене ÿстерсе çитĕнтерчĕ, халăх массин культурăпа техника пĕлĕвне чылаях ÿстерчĕ. Ленинпа Сталин партийĕ нумай шутлă совет интеллигенцине ÿстерсе çитĕнтерчĕ, халĕ вĕсем рабочисемпе хресченсене Хĕрлĕ Çара кирлĕ япаласем туса кăларма пулăшса пыраççĕ.

Большевикла партин политики эксплоататорла классене пĕтересси патне, пирĕн тăван çĕршывăн мораллĕ-политикăллă пĕрлĕхне туса ăна çирĕплетесси патне, рабочи класпа хресченсем тата интеллигенци хушшинчи союза çирĕплетесси патне, СССР халăхĕсен туслăхĕ çирĕплетесси патне, историре пулман патриотизмлă çĕкленÿ патне илсе пычĕ.

Советсем, пирĕн государствăн политикăллă никĕсĕ пулса тăрса, вăрçă вăхăтĕнче хăйсен пысăк вăйне кăтартса пачĕç. Совет стройĕ, хăйĕн тымарĕсемпе массăсемпе çыхăнса тăраканскер, тăшмана отпор пама пĕтĕм халăх вăйне мобилизацилемелли чи лайăх форма пулса тăчĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ совет государстви вăрçă вăхăтĕнче тата та вăйланчĕ.

Совет стройĕн вăйĕпе хăвачĕ Хĕрлĕ Çара вăй парса тăракан çăлкуçĕ пулса тăчĕç. Çар вăл — хăйĕн обществин пĕр пайĕ. Хĕрлĕ Çарта совет обществин нихăçан арканми мораллĕ-политикăллă пĕрлĕхĕ курăнса тăрать. Хĕрлĕ Çарта ытти çарсенчи пек класлă тата нациллĕ хирĕçÿсем çук. Çавăнпа та вăл тĕнчере чи вăйлă çар пулса тăрать. Унăн воинĕсем пурте,— салтаксемпе офицерсем те, генералсем те — ĕççыннисен ывăлĕсем, халăх ывăлĕсем.

Хĕрлĕ Çар — халăхсен тăванлăхĕпе туслăхĕн çарĕ. Ленинла—Сталинла наци политики, ĕлĕк пусмăрта пурăннă халăхсене пурнăç çулĕ çине кăларнăскер, Хĕрлĕ Çарăн боевой вăйне ÿстерекен çăлкуçĕ пулса тăчĕ. Хĕрлĕ Çарăн воинĕсем, вĕсем кирек мĕнле наципе пулсан та, тăшмана хирĕç калама çук паттăррăн кĕрешеççĕ, çумма-çумăн тăрса пурте хăйсен тăван çĕршывне сыхлаççĕ. Совет стройне пула, пирĕн çĕршывра пур халăхсем хушшинчен те талантлă çар кадрĕсем ÿссе çитĕнчĕç. Вырăс салтакĕн патриотла туйăмĕсене Совет Союзĕнчи пур халăхсен воинĕсем те пелсе вĕренсе илчĕç. Союзлă республикăсенче çар формированисем туни Хĕрлĕ Çар вăйне татах та ытларах çирĕплетет.

Совет стройĕ Хĕрлĕ Çара чăн-чăн халăх çарĕ туса хучĕ. Нимĕнле çара та, Хĕрлĕ Çара пĕтĕм халăх пулăшса пынă пек, Хĕрлĕ Çара юратнă пек, пулăшмаççĕ те юратмаççĕ те. Мĕншĕн тесен Хĕрлĕ Çар хăйĕн тăван çĕршывĕн телейлĕхĕшĕн кĕрешет.

Пирĕн Хĕрлĕ Çар чăн-чăн халăх çарĕ пулса тăни ăна чи çÿлти пусăмра тăракан дисциплинăллă çар туса хурать. Пирĕн задача — Хĕрлĕ Çарти дисциплинăна пĕрмаях çÿлте тытса тăрасси. Пирĕн Хĕрлĕ Çарти дисциплина çÿлти пусăмра тăни, пирĕн командирсемпе боецсем ăнланулла пулни — Сталин юлташ вăрçă мастерлăхне вĕренсе алла илмелле тесе кăтартса панине çав тери кĕске срокра пурнăçа кĕртсе пыма май пачĕ. Вăрçă пынă вăхăтра Хĕрлĕ Çар кучухнехи вăрçăн искусствине вĕренсе алла илчĕ.

Хĕрлĕ Çар хăйĕн çар мастерлăхĕ тĕлĕшĕнчен — стратеги, оперативлă искусство, маневрлă тактика тĕлĕшĕнчен, тактикăллă тĕрлĕ приемсемпе пĕлсе усă курас тĕлĕшрен — нимĕçсен фашистла çарĕнчен малта тăрать. Хĕрлĕ Çарăн военачальникĕсем нимĕçсеннинчен малта тăни çинчен фашистсем, кÿренсе пулин те, хăйсемех калаççĕ.

Хĕрлĕ Çара аслă çĕнтерÿсем тума большевиксен партийĕ хавхалантарса, организацилесе пырать. Ленинпа Сталин партийĕ — пирĕн государствăн нихăçан арканми вăйĕ пулса тăрать, мĕншĕн тесен совет стройĕн çитĕнĕвĕсем пĕтĕмпех большевиксен партийĕ ырми-канми ĕçленипе пулса пынă. Большевиксен партийĕн халăх массисен хушшинчи авторитечĕ калама çук пысăк, урăх нимĕнле парти те нихăçан та ун пек авторитетлă пулман.

Хĕрлĕ Çар вăйĕн çăлкуçĕ—ăна совет государствине тăвакан генисем Ленинпа Сталин организацилесе пăхса çитĕнтернинче пулать. Ленин ячĕ, Ленин сăнарĕ пирĕн воинсене вилĕмсĕр чаплă ĕçсем тума хавхалантарать. Хĕрлĕ Çар кучухнехи— чи вăйлă çар пулса тăни çакăнтан та килет: вăл сталинла стратегипе çапăçать, ăна совет халăхĕн çулпуçĕ, пирĕн тăван çĕршыва вăйлатса чапа кăларакан аслăран та аслă полководец Сталин ертсе пырать.

Сталин ертсе пынипе пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар нимĕçсен фашистла çарĕсене çухату хыççăн çухату тÿстерет. Фашистла нимĕç çарне вăйлăн çапса çĕмĕрнĕ, халĕ ĕнтĕ вăл ăна тĕпĕ-йĕрĕпех аркатса тăкасси умĕнче тăрать.

Халĕ хĕвеланăç енчен гитлерла Германие пирĕн союзниксем хĕстерме пуçларĕç. Халĕ ĕçсем нумай улшăнчĕç.

Вăрçăн виçĕ çул хушшинчи итогĕсем гитлерла Германи вăрçăра парăнасси çинчен, ăна пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкас сехет çывхарса килни çинчен уçăмлăн каласа параççĕ. Вăрçă вĕçленсе пырать. Анчах та пĕтĕмпех çĕнтересси патне пымалли çулăн юлашки пайĕ çăмăл пулмасть. Вăрçă чи хаяр, татăклă та йывăр тапхăра кĕчĕ. Аманнă фашистла тискер кайăк урса кайса хирĕç тăрĕ. Фронт Германи чикки патне çывхарса пынă май, гитлеровецсем татах та хытăрах хирĕç тăрĕç. Тăшмана тĕпĕ-йĕрĕпех аркатса тăкас тесен, ăна тата темиçе хутчен хăватлăн пыра-пыра çапни кирлĕ. Эпир хамăрăн çитĕнÿсемпе лăпланса ларма пултараймастпăр. Тăшман чăнкă çырана хăй тĕллĕн пырса сикес çук, ăна унта хĕстерсе пырса, тĕксе ярас пулать. Фашистла нимĕç çарĕсене тĕплийĕррипех çапса çĕмĕрме Хĕрлĕ Çар вăрçă ĕçне тата хытăрах вĕренсе алла илни кирлĕ. Тылри çынсен—рабочисен, колхозниксен, интеллигенцин—фронта ытларах пулăшас майпа татах та вирлĕрех ĕçлемелле.

Сталин юлташ ертсе пынипе пирĕн Хĕрлĕ Çар нимĕçсен фашистла çарне тĕпĕ-йĕрĕпех çапса çĕмĕрес кун çывхарса килет. Çав куна çывхартассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлер!

М. АНДРЕЕВСКИЙ.

Çынсене пĕтермелли Люблинри лагерь

Люблин хулинчен икĕ километр аяккарахра, пĕр пушă выртакан вырăнта, нимĕçсем 1941 çулăн пуçламăшĕнче «концентрациллĕ» лагерь организациленĕ. Унта мĕн пулса иртни çинчен никам та нимĕн те пĕлмен. Хĕрлĕ Çар Люблин хулине ирĕке кăларнă хыççăн кăна çав лагерь вилĕм лагерĕ пулни паллă пулса тăчĕ.

Лагере тăвас ĕç 1941 çулхи хĕлле пуçланнă, ăна тĕплĕн шухăшласа палăртнă проект тăрăх тунă. Кунта ĕçлекенсем тыткăна лекнĕ çар çыннисем пулнă. 1942 çулхи май уйăхĕ тĕлне 40.000 çын выр[illegible]ем, ытти тĕрлĕ «специальнăй çуртсемпе подсобнăй çуртйĕрсем туса пĕтернĕ. Çав çуртйĕрсем таврашĕнчи 25 тăваткăл километрлă мĕнпур территорие йĕплĕ пралук карса çавăрнă.

Малтан ку вырăна официальнăй хутсенче — «СС çарĕсен Люблинри концентрациллĕ лагерĕ» тенĕ. Кайрантарах вара, официальнăй мар хутсенче тата нимĕçсем хăйсем хушшинче каласнă чухне ăна — «фернигтунглагерь» тесе чĕнме пуçланă. Çакă вăл нимĕçлерен куçарсан «çынсене пĕтермелли лагерь» тенине пĕлтерет. Вăл тĕрĕссипех çавăн пек лагерь пулнă та ĕнтĕ.

Кунта нимĕçсем Европăри мĕнпур оккупациленĕ çĕршывсенчи районсенчен хăйсем тыта-тыта хупнă çынсене хăваласа килнĕ. Лагерьте тупнă документсем тăрăх, кунта поляксем, вырăссем, украинецсем, еврейсем, чехсем, словаксем, грексем, сербсем, итальянецсем, французсем, голландецсем, венгерсем, норвежецсем тата туроксемпе швейцарецсем, китаецсемпе негрсем те пулнă. Хелм хулинчен килекен шоссе çулĕ тăрăх кашни кун тенĕ пекех, гитлеровецсен конвойĕсем сыхласа пынипе, нумай пин çынлă колоннăсем пырса тăнă. Анчах кунта лекнисенчен никам та каялла тухайман. Тытса хупнисене пурне те пĕтерсе пынă.

Нимĕçсем хăйсен аллине лекнĕ çынсене пĕтерес ĕçре тĕрлĕ майсемпе усă курнă. Çынсене пере-пере пăрахнă, çакса вĕлернĕ, газсемпе пăчăхтарса вĕлернĕ, çунтарса янă тата ытти те. Командовани приказĕ тăрăх, лагере лекнĕ çынсене чăн малтанах карантина ăсатнă. Тыткăна лекнĕ çар çыннисене пурне те уçă формăллă туберкулезпа чирленĕ çынсем выртакан бараксене кăна вырнаçтарнă. Çавăн пек «карантинра» виçĕ эрне пулнă хыççăн çынсем туберкулезпа чирленĕ. Лагерьти нимĕç администрацийĕн официальнăй документсем тăрăх, 1944 çулхи март уйăхĕнче кăна туберкулезпа чирлесе 1.654 çын вилнĕ.

Çынсене çакса вĕлермелли такан — гитлеровецсем анлăн усă куракан тĕп майсенчен пĕри пулнă. Çав такан валли ятарласа тунă будка пулнă. Унта вăрăм кашта çинче 8 пăяв хатĕрех çакăнса тăнă.

Нимĕçсем çынсене газлă камерăсенче пăчăхтарса вĕлернĕ. Çав камера — тăваткăл пÿлĕм, унăн çÿллĕшĕ 2 метр таран, урлăшĕпе тăршшĕ 6-шар метр. Хурçă алăк çав пÿлĕме кĕмелли шăтăка сывлăш тухмалла мар питĕрсе лартать. Пÿлĕмĕн стенисемпе маччине тата урайне бетонран тунă. Çав бетон шăтăка нимĕçсем пĕр вăхăтрах 250 çынна ытла хăваласа кĕртнĕ. Çынсене пурне те малтан çарамаслантарнă, вара камерăна пĕр-пĕрин çумне таччăн çыпăçтарса тăратса тухнă. Хурçă алăка хупса лартсан, унăн хĕррисене сывлăш кĕмелле мар туса тăм сĕрнĕ. Кун хыççăн ятарласа çав тĕлĕшпе ĕçлекен команда, противогазсем тăхăнса, камерăна трубасем витĕр «циклон» ятлă япала сапнă. Вăл кристалл пек япала, сывлăшри кислородпа пĕрлешсе, вăл çынсене анратса вĕлерекен газ кăларать. Хăйсен куçĕпе курнă çынсем кăтартса панă тăрăх, камерăри çынсем çав газпа 2—10 минута хушшинче пăчăхса вилеççĕ. Хăйсем тунă тискер ĕçсен йĕрĕсене пытарса хăварас тесе, нимĕçсем вĕлернĕ çынсен ÿчĕсене çунтара-çунтара янă.

Газлă камерăран инçех мар 1943 çулхи кĕркуннеччен вилнĕ çынсене çунтарса ямалли крематори ларнă. Анчах унта çынсене нумаях çунтарса яма май килмен пирки, çав крематори нимĕçсене çырлахтарайман. Гитлеровецсем вара тепĕр вырăнта нумай хăвăртрах ĕçлекен çĕнĕ крематори туса лартнă. Кивĕ крематорире талăкра 150 çынна яхăн çунтарма май пулнă. Çĕнĕ крематорире, 1.500 градуслă вĕрие тÿсекен чи çирĕп кирпĕчсенчен тунăскерĕнче вара, талăкра вăтамран 1.400 çынна çити çунтарса яма май килнĕ. Свидетельсем тата Люблин хулинче пурăнакан çынсем каласа панă тăрăх, çав çурăн çÿллĕ трубинчен кунĕн-çĕрĕн тĕтĕм тухса тăнă. Крематорин тамăкла ĕçĕ пĕр самантлăха та чарăнса тăман.

Лагере çынсен уйрăмах пысăк ушкăнĕсене хăваласа пынă кунсенче нимĕçсем çынсене йышлăн пере-пере пăрахнă. Свидетельсем 1943 çулхи ноябрĕн 3-мĕшĕнче гитлеровецсем лагерьте уйрăмах тискер ĕç туса ирттерни çинчен калаççĕ. Ирхине мĕнпур лагерь тавра вăйлă хурал тăратса тухнă пулнă. Хелмран килекен шоссе çулĕ тăрăх çынсен вĕçĕ-хĕррисĕр колонни куçма тытăннă. Анчах вĕсене, лагере пырса кĕнĕ-кĕменех, пере-пере пăрахнă. Пулеметсемпе автоматсем шатăртатнипе, çынсем кăшкăрашса йынăшнине хупласа лартас тесе, гитлеровецсем ятарласа тракторсене ĕçлеттернĕ, хăватлă рупорсем лартса ташă кĕввисем янраттарнă. Çав кун крематори çывăхĕнче арçынсемпе хĕрарăмсене тата ачасене — 18.000 çынна персе пăрахнă. Лагерьтен куллен парса тăракан отчетра ноябрĕн 3-мĕшĕнче çапла çырнă: «Илсе пынă çынсен йышĕ палăрмаллах чакни çав кун лагере пынă 18.000 çынна яланхи меслетпе пĕтерсе тăкнинчен килет», тенĕ.

Лагере лекнĕ çынна кирек мĕнле самантра та, нимĕç администрацийĕн кирек мĕнле представителĕ те кирек мĕнле майпа та вĕлерме пултарнă. Начарланса хал пĕтсе çитнипе ĕçленĕ çĕртех ÿкекен çынна çийĕнчех персе пăрахнă. Нимĕç хуралçисем лагерьти çынсене персе пăрахнă чухне, бассейнри шыва путарса вĕлернĕ чухне тĕрлĕ мыскарасем туса иртĕхнĕ.

Люблинри лагерьте мĕн чухлĕ çынна вĕлерсе пĕтерни çинчен калакан тулли даннăйсем халĕ çук-ха. Анчах нимĕçсенчен тытса илнĕ документсенчен, лагерьте пулнă, анчах чĕрĕ юлнă çынсем тата свидетельсем кăтартса панинчен кунта темиçе çĕршер пин çынна вĕлерсе пĕтерни паллă. Лагерьте тара кĕрĕшсе ĕçлекен специалистсем вырăнĕнче пулнă Денисовпа Елинский инженерсем лагерьте Францин премьер-министрĕ пулнă Леон Блюма вĕлерни çинчен каласа параççĕ.

Кунта çынсене çав тери нумай вĕлернине вилнĕ çынсен атă-пушмакĕсене тултарнă барак та кăтартса парать. Темиçе вунă метр тăршшĕ тата сарлакĕш çурт çав атă-пушмаксемпе туллиех тулса ларнă. Вилнĕ çынсен атă-пушмакĕсене, çавăн пекех тумтирĕсемпе ытти япалисене те нимĕçсем суйласа илсе, вĕсемпе усă курнă.

Гитлеровецсем тискер чунлă пулни çинчен этемлĕх такçанах пĕлет ĕнтĕ. Анчах Люблинра тунă ĕçсем нимĕçсен халичченхи мĕнпур тискер ĕçĕсенчен нумай мала иртсе каяççĕ. Кунта нимĕçсем хăйсем оккупациленĕ çĕршывсемпе районсенчи халăхсене вĕлерсе пĕтермелли лагерь туса хунă пулнă.

Хĕрлĕ Çар тата пирĕн союзниксен çарĕсем нимĕç пусмăрĕ айĕнче асапланакан мĕнпур халăхсене ирĕке кăларассишĕн çапăçаççĕ. Гитлеровецсем хăйсем тунă тискер ĕçсемшĕн ответ тытассинчен пăрăнса юлаймĕç. Вĕсем «çынсене пĕтермелли Люблин лагерĕнчи» çав тери хăрушă ĕçсемшĕн те тивĕçлипе чи хаяр ответ тытĕç.

И. ПАВЛОВ.

Çĕнĕ вĕренÿ çулĕ умĕн

Кунта хатĕрленмеççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Аксаринăри тăватă çул вĕренмелли шкул вĕренÿ çулне çителĕксĕр хатĕрленет. Шкул çуртне юсама пуçлани чылай вăхăт иртрĕ пулсан та, ĕçе вĕçне çитермен-ха. Иртнĕ хĕлсенче шкулăн пĕр класĕнче ачасем хĕлĕпех тумтирпе, çĕлĕксемпе ларнă. Çак класа кăçал та юсаман. Хĕлле хутма шкулăн 100 кубометр вутă турттарса хатĕрлемелле. Анчах шкула пĕр пуленке вутă та кÿрсе килмен, касса та 38 кубометр кăна касса хатĕрленĕ.

Аксарино шкулĕ çывăхĕнчи колхозсем пурте пекех уйри тырпула пухса кĕртессине начар йĕркеленĕ. Учительсем шкул ачисене организациленĕ пулсан, нумай пучах пухма пулнă, анчах кунта ку ĕçе туса пымаççĕ.

Вĕренÿ çулĕ пуçланнă тĕле вĕренме кирлĕ кĕнекесене улăштарса хатĕрлемелле, ăна туман, ручкăсем, карандашсем те çук.

М. ИЛЬИН.

Боецсем тав тăваççĕ

Шупашкарти ача площадкисене çÿрекен ачасем пĕр эвакогоспитальре сывалакан боецсене тĕрлĕ майпа пысăк пулăшу пачĕç. Июльпе август уйăхĕсенче вĕсем госпитальре 10 концертпа выступлени туса ирттерчĕç. Кашни кунах палатăсене аманнă боецсем валли чечексем, хут, конвертсем илсе пырса паратчĕç. Аптека савăчĕсем 200 ытла пухса пачĕç. Аманнă боецсем çав ачасене тата вĕсен руководителĕсене госпитальре выртакан боецсемшĕн тăрăшнăшăн чунтан-чĕререн тав тăваççĕ, ачасем пирĕн Тăван çĕршыва хÿтĕлесе аманнă боецсемшĕн малашне те пур майпа та тăрăшĕç тесе шанса тăраççĕ.

Д. ЛЯШКО,
Пĕр госпитальри пропагандист.

Манăн йышлă çемье

Эпĕ 6 ача амăшĕ. Манăн виçĕ ывăлпа тепĕр хĕр фронтра. Кĕçĕн ывăлăм Александр 10 çул ĕнтĕ Хĕрлĕ Çар ретĕнче тăрать. Малтанах вăл Финлянди захватчикĕсене хирĕç çапăçрĕ. Халĕ — Отечественнăй аслă вăрçăра. Хаяр çапăçусенче кунран-кунах ÿссе пырать, ĕнтĕ майор ятне илчĕ. Вăрçăра паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн ăна «За отвагу» медальпе наградăланă.

Аслă ывăлăм — Егор вăрçăччен колхоз уйхирĕнчи стахановец пулнăччĕ. Халĕ вăл — связист. Нумаях пулмасть ăна та «За отвагу» медальпе наградăланă.

Аслă хĕрĕм, Марня, вăрçăн малтанхи кунĕнчен пуçласах фронтри госпитальре медсестра пулса ĕçлет. Мĕнпур ĕçе тÿрĕ кăмăлпа тата чыслăн пурнăçласа пынăшăн ăна та темиçе хутчен те тав тунă.

Эпĕ ачасене совет шкулĕнче вĕрентсе тата килте тĕрĕс пăхса ÿстертĕм. Вĕсем тăван çĕршывшăн, телейлĕ пурнăçшăн малашне те чĕререн парăнса ĕçлĕç.

Государство пирĕн пурнăçа çăмăллатас тесе, нумай тĕрлĕ пулăшусем парать. Çĕнĕ Указ çамрăк ăрăва лайăх ÿстерме майсем туса пачĕ. Ĕнтĕ ывăл-хĕрсен телейлĕ çемьисем хăйсен ачисене те çĕршыва юрăхлă пăхса ÿстерĕç.

Т. СОФРОНОВА,
Ишлей районĕнчи «Гвардия» колхоз членĕ.

Украинăра 22.000 шкул çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕр

Украинăри ĕççыннисем пур йышши шкулсене те çине тăрсах юсаççĕ, çĕнĕ вĕренÿ çулне пуçлама вăйлăн хатĕрленеççĕ. Шкулсен çурчĕсене юсаççĕ е туса çитереççĕ, вутă кÿреççĕ, вĕренÿ хатĕрĕсем хатĕрлеççĕ, учительсем курссенче вĕренсе хатĕрленеççĕ.

Халăх вăйĕпе пĕр Сталино облаçĕнче кăна пин шкула яхăн юсанă, пĕтĕм Украинипе 22.000 шкул çуртне туса çитерне, е юсаса пĕтерне.

Украинăри шкулсене Тăванла РСФСРти аслă шкулсемпе ытти шкулсем пысăк пулăшу панă: вĕсем Украинăри шкулсене темиçе çĕр пин кĕнеке, учебниксем тата кабинетсемпе лабораторисем валли оборудовани янă. (ТАСС).

Çĕр миллион тенкĕ перекетленет

Боеприпас Халăх Комиссариачĕн завочĕсенче изобретательствăпа рационализаци уйăхлăхĕ вĕçленнĕ. Çав уйăхлăхра тунă 8.500 сĕнÿрен 4.000-не яхăн пурнăçа кĕртнĕ те ĕнтĕ. Йышăннă сĕнÿсене пурнăçа кĕртнине пула çулталăкра 100 миллион тенкĕ ытла перекетлеме пулать. (ТАСС).

Виçĕ çулхи нормăна тултарнă

Донбасри паллă забойщик Михаил Афонин кăçал виçĕ çулхи нормăна тултарнă. 7 уйăх хушшинче вăл 63 пин тенкĕ укçа ĕçлесе илнĕ. Унăн юлташĕ Борис Колюжный халь икĕ çулхи нормăна пурнăçа кĕртсе çитерет. Шахтăн Афонинпа Колюжный ĕçлекен участокĕсенче çулталăкри плана срокчен тултарассишĕн ăмăрту сарăлса кайнă. (ТАСС).

Вăйлă тырпула вăхăтра пухса кĕртĕпĕр

Красноармейски районри «Новое хозяйство» колхоз кăçал тырă вырма тухиччен тĕплĕн шухăшласа план турĕ. Çав плана колхозниксемпе лайăх сÿтсе явни тата ĕçре хăшпĕр чăрмавсем пулассине малтанах курса тăни тырпул пухса кĕртес ĕçе ăнăçлăн организацилеме май пачĕ. Колхозра уйхир ĕçĕсене пĕтĕмпех уйрăм сдельщинăпа тăваççĕ. Çапла ĕçлени ĕç тухăçлăхне палăрмаллах ÿстерчĕ. Тырă вырнă çĕрте нормăна 2—3 хут ирттерсе тултаракансен йышĕ чылай пысăк. Сăмахран, Ф. Порфирьева, Т. Семенова, К. Ерисова, С. Порфирьева колхозницăсем ырми-канми ĕçлесе мала тухрĕç. Колхоз бригадирĕ А. Терентьев юлташ — вăрçă хирĕнчен аманса таврăннă çын. Вăл кашни ĕçе мĕнле тумаллине тĕплĕн кăтартса парать тата ĕç кунĕ вĕçленнĕ тĕле кам мĕн чухлĕ ĕçленине, мĕн чухлĕ ĕçкунĕ тунине пĕлтерет.

Колхозницăсем вырнă хыççăн кĕлтене çĕмеле е сурата хывсах параççĕ, уйра хĕмсенче нумай вăхăт выртни пулман. Халĕ ĕнтĕ кĕлте турттарса капана хывма тытăнчĕç. Капан тума ку ĕçе лайăх пĕлекен ватă колхозниксене И. Порфирьев, К. Порфирьев, К. Прокопьев, А. Федоров юлташсене уйăрнă. Вĕсем капансене ишĕлмелле е шыв кайса пăсăлмалла мар тăваççĕ.

Пирĕн колхозра тăватă лаша вăйĕпе ĕçлекен молотилка пур, ăна тырă вырма тухиччен лайăх юсаса хатĕрленĕ. Машинăпа ĕçлеме пĕлÿ кирлĕ. Çавăнпа та çак ĕçе эпир правлени членне, машинăпа ĕçлеме лайăх пĕлекен С. Алексеев юлташа уйăртăмăр. Молотилка ĕçлеме тытăннăранпа пăсăлман, яланах лайăх ĕçлет. Машинăпа çапма палăртнă нормăна тăтăшах тултарса пыраççĕ.

Колхоз умĕнче тăракан тĕп задача вăл— государствăна вăхăтра тырă парса татасси. Колхозра ут таврашĕсем, урапасем, михĕсемпе шăналăксем çителĕклĕ те юсавлă. Ут таврашĕсене юсас тĕлĕшпе икĕ ватă колхозник—А. Федоровпа Т. Игнатьев юлташсем ĕçлеççĕ. Вĕсем 65 çулта, иккĕшĕн те ывăлĕсем фронтра.

— Пирĕн ватăлăх çитнĕ, эпир хирте тырă выраймастпăр. Лаша кÿлмелли хатĕрсем яланах виçеллĕ тата юсавлă пулсан, вĕсемпе çул çÿреме лайăх тата ытларах та тиеме пулать. Çÿсмен е ĕнерчĕк юсасси пирĕншĕн йывăр мар, çав питĕ кирлине кура, эпир ут таврашĕсене яланах юсавлă тытма шутларăмăр,—теççĕ вĕсем.

Кладовщик Д. Сорокин юлташ кĕлетсемпе складсене пĕтĕмпех юсаттарнă, шал енчен шуратнă, урайĕнчи шăтăксене питĕрнĕ. Итемрен кĕрекен тырра вăл пĕтĕмпех виçсе йышăнать. Виçесене юсанă, вĕсем мĕнле ĕçленине ревизи комисси тата колхоз правлени членĕсем тĕрĕсленĕ. Пухса илнĕ тыррăн кашни килограмĕ висĕнет. Ăна кашни колхозникпе колхозница пĕлсе тăрать.

Фронтри тата тĕнчери лару-тăрупа колхозниксем питĕ интересленеççĕ. Колхозниксене Хĕрлĕ Çар çĕнтерÿсем туса пычи çинчен колхозри агитаторсем И. Иванов (Отечественнăй вăрçă инваличĕ) тата А. Руссина юлташсем лайăх ăнлантарса параççĕ, вĕсем яланах колхозниксем хушшинче. Тырă вырнă вăхăтра суранланакансене малтанхи пулăшу парас тĕлĕшпе М. Спиридоновăпа А. Кириллова юлташсем ĕçлеççĕ. Вĕсем колхозри аптечкăпа усă курма лайăх пĕлеççĕ.

Колхозри ĕç ăнăçлă пырать. Колхозниксен ĕçлес хастарлăхĕ пысăк. Тырпулсене вăхăтра тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртсе государствăна памалăх та, хамăр членсене ĕçкунĕсем тăрăх валеçмелĕх те çителĕклĕ тырă туса илессишĕн пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем ăмăртса ĕçлеççĕ.

Г. ЕРИСОВ,
«Новое хозяйство» колхозри ревизи комиссийĕн председателĕ.

Франциири вăрçă ĕçĕсем

СОЮЗНИКСЕН ЭКСПЕДИЦИЛЛĔ ВĂЙĔСЕН ВЕРХОВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔН ШТАБĔ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, августăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

«Союзниксен çарĕсем Нормандире тăшман çарĕсене çавăрса илнĕ унка хĕссех пынă, тăшман чаçĕсен Фалез хулинчи юлашкийĕсене пĕтерсе тăкнă. Фалез хулинчен хĕвелтухăçнерехре йывăр çапăçусем пыраççĕ. Пирĕн çарсем Кондэ хулине йышăннă. Кунтан хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем Теншебрэ хулине ирĕке кăларнă, ун хыççăн вара хуларан хĕвелтухăçнелле куçнă, çавăн пекех тата Жер хули патĕнчен те хĕвелтухăçнелле кайнă. Ла-Ферте-Масе хулинчен çурçĕрелле тата Домфрон хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнелле пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине пăхмасăрах, 6 миля таран малалла кайнă.

Бретаньре Динăр портне пĕтĕмĕшпех йышăннă. Сен-Мало крепоçĕнчи нимĕçсен гарнизонĕ çаплах хытă хирĕç тăрать.

Çанталăк начар тăнă пирки Çурçĕр Франците союзниксен авиацийĕ вăйлах çапăçайман».

ЛОНДОН, августăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, августăн 16-мĕшĕнче каçхине американецсен Нормандири 1-мĕш армийĕн штабĕ официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: Нормандире нимĕçсен вунпĕр дивизине пĕтĕмĕшпех çавăрса илнĕ.

АМЕРИКА ÇАРĔСЕМ ШАРТР ХУЛИПЕ ОРЛЕАН ХУЛИНЕ ЙЫШĂННĂ

ЛОНДОН, августăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Франциири корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: американецсен 3-мĕш армийĕн чаçĕсем Шартр хулине йышăннă, Дре хули патне çитнĕ.

ЛОНДОН, августăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Америка çарĕсемпе пĕрле пыракан корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Америка çарĕсем Орлеан хулине йышăннă. Американецсен патрулĕсем, Шартр хулинчен малалла куçса пырса, Париж патне çывхараççĕ.

СОЮЗНИКСЕН ВĂТАÇĔР ТИНĔС ТАВРАШĔНЧИ ÇАРĔСЕН ШТАБĔ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, августăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи çарĕсен штабĕ çапла пĕлтернĕ:

«Союзниксен çарĕсем Кăнтăр Франциири çыранăн тĕрлĕ участокĕсенче çĕр çине малтанах йышăннă план тăрăх анаççĕ. Суднăсен караванĕсем çĕнĕ вăйсем илсе пырсах тăраççĕ. Суднăсем пушатакан вырăнти шыва минăсенчен пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех тасатнă.

Кăнтăр Франциире союзниксен çарĕсем çаплах малалла каяççĕ. Чылай пунктсенче вĕсем çыранран 17 километр шалалла кайнă. Суднăсем çинчен аннă чаçсем Франциире нумай шалта антарнă парашют чаçĕсемпе пĕрлешнĕ.

Тăшманăн çыранри оборонине, сывлăшран бомбăсем нумай пăрахса тата тинĕсрен персе, пĕтĕмĕшпех пусарса лартнă. Союзниксен çухатăвĕсем пысăк мар. Тăшмана йывăр çухату кÿнĕ тесе шутлама çителĕклĕ сăлтавсем пур.

Флоренци хулинче акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем хулана çаплах тăшманăн уйрăм ушкăнĕсенчен тасатаççĕ. Италири фронтра ниçта та паллă улшăнусем пулман.

Ĕнер союзниксен авиацийĕ Кăнтăр Франциире 4 чугун çул кĕперне тата Фридрихсхафен хули çывăхĕнчи хими завочĕсене тапăннă. Çавăн пекех тата Югославипе Албанире тăшман транспорчĕпе тĕрлĕрен вăрçă объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ШТЕТТИН, КИЛЬ ТАТА БЕРЛИН ХУЛИСЕНЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, августăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: августăн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тăшмана акăлчансен 1.200 бомбардировщикĕ тапăннă. Пуринчен те вăйлăрах Штеттин тата Киль порчĕсене атакăланă. Икĕ портĕнче те вăйлă пушарсем тухнă. «Москито» йышши самолетсем Берлин çине бомбăсем пăрахнă.

ГИТЛЕРА ВĔЛЕРМЕ ТАПĂННИ ПИРКИ

ЛОНДОН, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Цюрих хулинчи дипломатсен шухăшĕпе, Гитлера хирĕç пулса иртнĕ пăлхава пурĕ 3—4 пин çын хутшăннă.

«ШАНЧĂКРАН ТУХНĂ» НИМĔÇ ОФИЦЕРĔСЕНЕ ТЫТСА ХУПНИ

ЛОНДОН, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: Норвегире Гитлера ырă сунмалли йĕркерен пăраннăшăн темиçе нимĕç офицерне тытса хупнă.

Осло хулинчен темиçе паллă нимĕç офицерĕ çухалнă. Ку таранччен те паллă мар: вĕсене тытса хупнă-ши е вĕсем хăйсем тарнă-ши.

«ШАНЧĂКСĂРА ТУХНĂ» НИМĔÇ ДИПЛОМАЧĔСЕНЕ БЕРЛИНА ЧĔНСЕ ИЛНИ

ЛОНДОН, августăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Швецирен илнĕ хыпарсем тăрăх, Лондонри радио çапла пĕлтернĕ: Германин тинĕс атташине Валерта тата авиаци атташине Гейманна Берлина чĕнсе илнĕ. Гестаповецсем çак атташесене вĕсем Гитлера хирĕç пулса иртнĕ пăлхава хутшăннă пулĕ тесе шутлаççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкарти апат-çимĕç комбиначĕ уйрăм çынсемпе организацисенчен сыпман улмуççи çинче пулнă панулмисем, шăлан çырли, пилеш, палан, кăмпасем, тĕрлĕ çырласем йышăнать. Çав япаласене паракансене конфет йышши таварсем, тăвар, супăнь тата ытти продуктсем те парать. Адрес: г. Чебоксары, ул. Совхозная, 1.

5—1.

Шупашкар хулинчи ветеринари лечебницин кил хушшинчен 1944 çулхи августăн 16-мĕшĕнче ЛАША ÇУХАЛЧĔ. Паллисем çакăн пек: ячĕ—«Сонька», тĕсĕ—кăвак, 19 çулта, çÿллĕшĕ—141 см.

Пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: Ишлейский район, Катрасевский сельсовет, правлению Больше-Катрасевского колхоза «Мотор».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00642 Типография № 1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.